Муркаш район хаçачĕ

Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнченпе тухать

95 (7735) № ✻ Шăмат кун, 2009 çулхи ноябрĕн (чӳк) 28-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Ноябрĕн 29-мĕшĕ – Ача амăшĕн кунĕ

Лайăххи, ырри – пĕтĕмпех аннесенчен

Эсир сăн ӳкерчĕкре куракан Зоя Ивановна Иванова Чуманкасси ял тăрăхĕнчи тĕслĕх библиотека ертӳçи пулса тăрăшать. Вăл хăйĕн виçĕ ачине пурнăç çулĕ çине кăларнă ĕнтĕ. Паян вара ĕçре хастарлăх кăтартнипе пĕрлех вăл мăнукĕсемшĕн юратнă кукамай та.

Н. НИКОЛАЕВА сăн ӳкерчĕкĕ.

Кашни çыншăнах амăшĕ чи çывăх та юратнă çын. Çут тĕнчене килнĕ пĕрремĕш кунран пуçласа ĕмĕр тăршшĕпех аннесем хăйсен пурнăçне пирĕншĕн тăрăшса ирттереççĕ. Çĕрне-кунне пăхмасăр тăрмашаççĕ, пире лайăх пултăр теççĕ-çке вĕсем.

Çулталăкра вара пĕр кун вĕсен уявĕ пулнăшăн пурин те савăнмалла. Вĕсене юратнине, хисепленине çак кун тата та ытларах кăтартма тăрăшмалла.

Акă çак эрнере район шайĕнче те аннесен уявĕ иртрĕ. Кăçал Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ пулнă май унта ял хуçалăхĕнче ырми-канми тăрăшнă хĕрарăмсене – ача амăшĕсене йыхравласа саламларĕç. Уява пуçтарăннисенчен нумайăшĕ 5-6 ача çуратса ӳстернĕ, пурнăç пурăнса курнă аннесем пулчĕç. Мĕн чухлĕ ырă та çепĕç сăмах янăрамарĕ пулĕ залра вĕсен ячĕпе.

Малтанах аннесене арçынсем саламлани уйрăмах сумлă пулчĕ. Район пуçлăхĕ Ю. Иванов, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ И. Николаев, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Никитин тата ыттисем пуç тайсах аннесене ăшă сăмахсем каларĕç. «Çĕр çинче мĕн лайăххи, мĕн ырри пур – пĕтĕмпех аннесемпе çыхăннă.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

ХАКЛĂ ЕНТЕШĔМĔРСЕМ!

Ача амăшĕн кунĕ ячĕпе сире чĕререн саламлатăп!

«Аннерен хакли çук»,– тесе каланă чăвашсем авалах. Амăшĕн ăшши тата юратăвĕ, ăшă кăмăлĕпе ăнланулăхĕ ывăлĕсемпе хĕрĕсен чĕрисене нихçан сӳнми çутăпа ăшăтса тăраççĕ. Ача амăшĕпе унăн ачине çыхăнтарса тăракан туйăмран ытларах нимĕн те çук тата пулма та пултараймасть. Çавăнпа та хамăра пурнăç паракансене пирĕн яланах асра тытмалла тата вĕсем пирки тăрăшмалла.

Чăваш Енре амăшĕсем хăйсен ачисемшĕн тăрăшчăр тата вĕсен шăпишĕн шанчăклă пулччăр тесе сахал мар ĕç туса ирттереççĕ. Ача амăшĕсен çие юлнă тата ача çуратнă, ачана пăхса пурăннă чухнехи уйăхсерен паракан пособийĕсене пĕтĕмпех сыхласа хăварнă. Тăлăха юлнă ачасенчен ытларахăшĕ çемьесенче амăшĕн юратăвĕпе ачашлăхне тупать. Вĕсене хваттерсемпе тивĕçтерес ĕç анлă сарăлнă. Амăшĕсемпе ачисене медицина пулăшăвĕ парасси те çӳллĕ шайра пулса пырать. Палăртма кăмăллă: çакă пĕтĕмпех демографи тĕлĕшĕнчи, социаллă лару-тăрава лайăхлатма май парать.

Чăваш Енри пур амăшĕсене те паян тав сăмахĕ калатăп. Вĕсен тимлĕхĕпе тата тĕрĕслĕхĕпе пурăнать те паян пирĕн республика. Сире çирĕп сывлăх, çемйĕрсенче чун ăшши, юрату тата пĕтĕмпех ыррине кăна сунатăп. Эсир юратакан тата сирĕншĕн хаклă çынсем яланах телейлĕ пулччăр!

Чăваш Республикин Президенчĕ Н. ФЕДОРОВ.

ХИСЕПЛĔ АННЕМĔРСЕМ!

Сире Ача амăшĕн кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.

Çĕр çинче мĕн ырри, лайăххи пур – пĕтĕмпех аннесемпе çыхăннă. Эсир ачăрсене кун-çул парнелесе пĕр канăç курмасăр ĕмĕр тăршшĕпех вĕсемшĕн çунатăр, вĕсене пурнăç çулĕ çине тăратассишĕн тимлетĕр, йывăрлăхсене çĕнтерме пулăшатăр, хавхалантаратăр.

Эсир çемьене килĕшӳ, ăнлану, телей, тулăх пурнăç кӳретĕр. Эсир – пурнăç илемĕ, пурнăç тыткăчи. Мĕн чухлĕ çепĕçлĕх, ырăлăх сирĕнте. Çав хушăрах эсир çирĕп кăмăллă та вăйлă. Вĕçĕ-хĕррисĕр ачашлăх упранать сирĕн чĕресенче. Çут тĕнчере аннен виçесĕр юратăвĕнчен хакли, пахи мĕн пур-ши? Ахальтен мар ĕнтĕ халăхра çапла калаççĕ: «Хĕвел питĕнче ăшă, анне çумĕнче ырă». Аннесем пуртан эпир телейлĕ.

Таймапуç сире, хаклă аннесем, тăрăшулăхшăн, иксĕлми ырă кăмăлăршăн. Сире пурне те çирĕп сывлăх, ăнăçу, çемьере тăнăç пурнăç тата телейлĕ кун-çул сунатăп.

Район пуçлăхĕ Ю.А. ИВАНОВ.

Тĕл пулу

Хăй ĕмĕтне пурнăçланă, чăваш хастарĕсене пулăшма хатĕр

Раççей Геройне Н.М. Бударин космонавта паян эпир ытларах Патшалăх Думин депутачĕ пулнă май пĕлетпĕр. Епле пуçланнă-ха пирĕн мухтавлă ентешĕн пурнăç çулĕ?

Ытлари кун республикăри журналистсемпе тĕл пулнă май Николай Михайлович хăй 1953 çулта Улатăр районĕнчи Кире поселокĕнче çуралнине палăртрĕ. Ачаранах космонавт пулма ĕмĕтленнĕ. Мускаври авиаци институтĕнче вĕреннĕ. Хыççăн «Энергия» НПОра инженерта ĕçленĕ, «Мир» орбита карапне, «Буран» карапа тума хутшăннă. Анчах космоса çĕкленес ĕмĕтне пăрахман.

1989 çулта ăна космонавтсен отрядне илнĕ. Пĕрремĕш хут тĕнче уçлăхне 1995 çулта, иккĕмĕш хут 1998 çулта, виççĕмĕш хут 2002 çулта вĕçнĕ. Космосра пĕтĕмпе 444 талăк пулнă. Уçă космоса 8 хут тухнă. 1995 çулта Н.М. Бударина Раççей Геройĕн ятне панă.

Космоса 3 хут çĕкленнине, уçлăха 8 хут тухнине паттăрлăхпа кăна танлаштарма пулать! Николай Михайлович космоса арçынсен ĕçĕ тесе шутлать. Мĕншĕн тесен вăл кăткăс та йывăр.

Унăн асĕнче карапран уçă космоса тухни яланлăхах юлнă: «Çĕр çинче тренировкăсене шывра йĕркелеççĕ - çутă, илемлĕ. Унта вара люка уçса ятăм та – сĕм тĕттĕм. Станци çеккунтра 8 километр хăвăртлăхпа вĕçет. Çав самантра пирĕн карап уçлăхра хăйăр пĕрчи евĕр пулнине туйса илтĕм, эсĕ вара тата пĕчĕкрех. Манăн люкран ура ярса пусмалла...» Вĕрсе хăпартнă скафандрăра умлă хыçлă 6 сехет ĕçлеме те çăмăл мар. Калăпăр, пӳрнесене хутлатма кăна 13 килограмм чухлĕ вăйпа пусăм тумалла иккен.

Космонавтикăна аталантарассипе малашне те ĕçлеме кирлине палăртрĕ ентеш. Кăçалтан вĕçевсен программи икĕ хут ӳснĕ. Карапсене цифра формачĕ çине куçараççĕ. Çамрăк ăру та космоса тухма хатĕрленет.

Çав хушăрах Н.М. Бударин космонавтсен паянхи отрядĕнче пирĕн ентешсем çуккине пăшăрханса палăртрĕ. Кашни çыншăнах амăшĕ чи çывăх та юратнă çын. Çут тĕнчене килнĕ пĕрремĕш кунран пуçласа ĕмĕр тăршшĕпех аннесем хăйсен пурнăçне пирĕншĕн тăрăшса ирттереççĕ. Çĕрне-кунне пăхмасăр тăрмашаççĕ, пире лайăх пултăр теççĕ-çке вĕсем.

Çулталăкра вара пĕр кун вĕсен уявĕ пулнăшăн пурин те савăнмалла. Вĕсене юратнине, хисепленине çак кун тата та ытларах кăтартма тăрăшмалла.

Акă çак эрнере район шайĕнче те аннесен уявĕ иртрĕ. Кăçал Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ пулнă май унта ял хуçалăхĕнче ырми-канми тăрăшнă хĕрарăмсене – ача амăшĕсене йыхравласа саламларĕç. Уява пуçтарăннисенчен нумайăшĕ 5-6 ача çуратса ӳстернĕ, пурнăç пурăнса курнă аннесем пулчĕç. Мĕн чухлĕ ырă та çепĕç сăмах янăрамарĕ пулĕ залра вĕсен ячĕпе.

Малтанах аннесене арçынсем саламлани уйрăмах сумлă пулчĕ. Район пуçлăхĕ Ю. Иванов, депутатсен районти Пухăвĕн председателĕ И. Николаев, Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Н. Никитин тата ыттисем пуç тайсах аннесене ăшă сăмахсем каларĕç. «Çĕр çинче мĕн лайăххи, мĕн ырри пур – пĕтĕмпех аннесемпе çыхăннă.

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

Депутатсен Пухăвĕ

Районăн 2010 çулхи бюджетне йышăнчĕç

Ĕнер райадминистрацин ларусен залĕнче депутатсен районти Пухăвĕн черетлĕ 36 ларăвĕ ĕçлерĕ. Ларăва районти Пуху председателĕ И.В. Николаев ертсе пычĕ.

Депутатсем кун йĕркине (вăл иртнĕ номерте пичетленнĕ) çирĕплетрĕç. Пĕрремĕш ыйтупа районăн 2010 çулхи экономикăпа социаллă аталанăвĕн прогнозне пăхса тухса çирĕплетрĕç.

Тĕп ыйту – районăн 2010 çулхи бюджетне сӳтсе явса йышăнасси. Бюджет проектне халăхпа ноябрĕн 20-мĕшĕнче ырланă. Ăна депутатсем яланхи комиссисен ларăвĕсенче те тишкернĕ. Çавна май депутатсем (çитес çулхи бюджет тупăшсемпе те, тăкаксемпе те кăçалхинчен пĕчĕкрех пулин те) ытлашши сăмах вакламасăр районăн 2010 çулхи бюджетне йышăнчĕç.

Çапла вара çитес çул перекетлĕрех пурăнма тивет. Укçатенкĕне кура.

Депутатсем кун йĕркинчи ытти ыйтусене те пăхса тухрĕç, тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕç.

Лару ĕçне район пуçлăхĕ Ю.А. Иванов хутшăнчĕ, сăмах каларĕ.

Пенси ыйтăвĕсемпе

Сирĕн пенси виçисем ӳсеççĕ

Валоризаци мелĕпе çитес çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ĕç пенсийĕсене ӳстерме палăртнă. Кунпа пĕрлех вара кăçалхи декабрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса пенсисен база пайĕ хăпармалла. Шăпах çавăн пирки ĕнтĕ пирĕн паянхи калаçу РФ Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕпе Елена Михайловна АЛЕКСАНДРОВАПА.

– Елена Михайловна, пенсисен база пайне мĕнле шутласа палăртаççĕ-ха?

– Ĕç пенсийĕсен база пайне федераллă бюджетран тӳлеççĕ. Вăл ĕç укçи шайĕнчен те, ĕç стажĕнчен те килмест. Вăл – çын ватăлсан, инвалида тухсан е çемьере тăрантаракана çухатсен патшалăх тивĕçтерекен гаранти.

Пенси реформи пурнăçа кĕнĕ чухне ĕç пенсийĕн база пайĕ ватлăха тухнипе параканни 450 тенкĕпе танлашнă, хаксем ӳснине кура ăна индексацилесе пынă. База пайне кăçал мартăн 1-мĕшĕнче ӳстернĕ, тепĕр хут вăл декабрĕн 1-мĕшĕнче ӳсет. Мартăн 1-мĕшĕнчен тытăнса база пайĕ 1950 тенкĕ пулнă. Декабрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса вара апрель уйăхĕн вĕçĕнче йышăннă 72-ФЗ № Федераллă саккун вăя кĕрет. Унпа килĕшӳллĕн ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕн база пайĕ 2562 тенкĕ пулать. Çапла вара декабрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса база пайĕ 612 тенкĕ чухлĕ ӳсет.

– Пур пенсионерăн та пенси виçи 612 тенкĕ ӳсет-и-ха?

– База пайне ӳстернĕ чухнехи тĕп принцип – «пурне те пĕр пек». Анчах та пенсионер пурнăçĕн лару-тăрăвне те шута илме пăхнă. Сăмахран, ватлăх çулне, инвалида тухнине пула ĕçлеме пултарайманнине, çемьере ĕçлеме пултарайманнисем пуррине.

Акă ватлăха пула, 2-мĕш степень инвалидноçа пула (2-мĕш ушкăн) тата çемьере тăрантаракана çухатнипе хăр тăлăхсене паракан ĕç пенсийĕн база пайĕ декабрĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса 2562 тенкĕпе танлашать е 612 тенкĕ чухлĕ ӳсет.

1-мĕш степень (3-мĕш ушкăн) инвалидсене тата çемьере тăрантаракана çухатнипе паракан пенсин база пайĕ ӳсесси икĕ хут пĕчĕкрех пулать, декабрьтенпе вăл 1281 тенкĕпе танлашать е 306 тенкĕ чухлĕ ӳсет.

80 çул тултарнă пенсионерсен тата 3-мĕш степень (1-мĕш ушкăн) инвалидсен çитес уйăхран пенсин база пайĕн виçи 1224 тенкĕ чухлĕ ӳсет, 5124 тенкĕпе танлашать.

– Çурçĕрте ĕçленĕ çынсен пенсийĕсем мĕн чухлĕ ӳсĕç-ши?

– Инçет Çурçĕр районĕсенче 15 çул ĕçленисен, кирлĕ чухлĕ страховани стажĕ пулсан, ĕç пенсийĕн база пайĕ 1,5 хут ӳсмелле. Çапла вара вăл 3843 тенкĕпе танлашать.

Çынсем вара Инçет Çурçĕрпе танлаштарнă районсенче календарлă 20 çултан кая мар ĕçленĕ тата кирлĕ чухлĕ страховани стажĕ çитет пулсан, ватлăха пула паракан пенсин база пайĕ 1,3 хут ӳсет те 3330 тенкĕ те 60 пуспа танлашать.

– Пенсионерăн çемьере иждивенецсем пулсан, унăн пенсийĕн база пайĕ мĕн чухлĕпе танлашĕ?

– Кашни иждивенец пуçне (анчах та пĕтĕмпе 3 иждивенецран ытла мар) ĕç пенсийĕн база пайне база виçин виççĕмĕш пайĕ чухлĕ ӳстерсе параççĕ. Ку вăл ĕçлеме пултарайман кашни иждивенец пуçне 854 тенкĕ пулать (2562 тенкĕ:3).

(Вĕçĕ 2-мĕш стр.).

Вĕренĕве чĕнетпĕр

Пахча çимĕç туса илме

Пахча çимĕç туса илесси тупăшлă ĕç пулнине юлашки çулсенче «Свобода» хуçалăхпа хăш-пĕр хресчен (фермер) хуçалăхĕсен тĕслĕхĕнче самай куратпăр. Анчах районта çав-çавах пахча çимĕçпе ĕçлесси тивĕçлĕ шайра пулса пымасть. Çакна шута илсе хĕл кунĕсемпе туллин усă курас тĕллевпе район администрацийĕн ял хуçалăх пайĕ ял хуçалăх производство кооперативĕнче ĕçлекенсемпе, хресчен (фермер) хуçалăхĕсенче вăй хуракансемпе, килти хушма хуçалăха тытса пыракансемпе пахча çимĕç туса илессипе вĕрентӳллĕ семинар-канашлу ирттерет. Вăл декабрĕн 2-мĕшĕнче район администрацийĕн ларусем ирттермелли залĕнче пулать, 10 сехетре пуçланать. Вĕрентĕве Ульяновскри «Симбирские семена» фирма ертӳçипе специалисчĕсем килеççĕ. Çак тĕл пулура пахча çимĕç туса илессине интересленекенсем малта пыракан технологисемпе те анлăн паллашма пултарĕç.

Килсе курăр! Ӳкĕнмĕр!

Хамăр инф.

Саламлатпăр

Хаклă çыннăмăра, çывăх тăванăмăра – Çĕн Чемей ялĕнче пурăнакан **Таисия Михайловна АГАКОВАНА** 75 çул тултарнă ятпа чи ăшă сăмахсемпе саламлатпăр, вăрăм кунçул, таса çăл куç пек тапса тăракан вăй-хал сунатпăр.

Саламлаканĕсем: Агаковсен, Сальниковсен, Григорьевсен, Цветковсен çемйисем.